К84.09(=чув)
К38
Ч-39678

КИБЕЧ

КĔЛĔ

МОЛИТВА

Национальная библиотека ЧР
4-039678



КФ К 84.09(=Чуа)
К 38

Кибеч

КЁЛЁ

Йӑлӑнупа ӳкёнӳ юррисем

☼☼☼

МОЛИТВА

Песнь мольбы и покаяния

Перевод А. Тургиля

Шупашкар – Чебоксары
2004

ДАРСТВЕННЫЙ ЭКЗ.

УДК 821.512.111
ББК 84(2 Рос -Чув) -4
К 42

За помощь
в издании данной книги
сердечная благодарность выражается
радио «Шансон» в Чебоксарах.

И-39678

НАЦИОНАЛЬНАЯ
БИБЛИОТЕКА
ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

Кибеч
К42 Кĕлĕ. – Молитва. – Чебоксары. 2004. – 88 с.

Чуваши веками жили с верой в своего Бога. В трудные моменты жизни обращались именно к Нему. Для тех, кто по воле судьбы был вынужден отвернуться от своего Бога, путь к сближению с Ним может начаться с песен мольбы и покаяния.

ПРОВЕРЕНО
2010

Лицензия ЛР № 066552
от 12.05.1999 г.

ISBN 5-7361-0083-5

© Кибеч, 2004

Умсăмах

XXI ĕмĕрте глобализаци туртăмĕ вăйланнăçемĕн йышлах мар халăхсен шăпи пушшех йывăрланса пырать. Ыттисемпе хутăшса кайса пачах çухалас хăрушлăх та куçкĕретех, уйрăмах чăвашсемшĕн.

Шел пулин те пирĕн пурнăç хамăрăн шухăшлава пăхăнса майлашăнса пыраймарĕ. Хусан ханстви вăхăтĕнче тутар йĕрки алхасрĕ, Раççейпе пĕрлешсен – вырăс еннелли туртăм вăй илчĕ, коммунизм тапхăрĕнче Маркспа Ленин вĕрентĕвĕ пуç пулса тăчĕ. Пирте ытларах ыттисен ăсĕ хуçаланчĕ. Чăваш шухăшлавĕ хăйне упранса юлма пулăшакан пурнăç йĕркипе ĕненĕве çирĕплетеймерĕ. Çавăнпа та паян хамăр Туррăмăра шанса ырăпа асăнни пĕртте ытлашши мар. Атьăр-ха çакна йăлăнупа ӳкĕнӳ юрринчен пуçлар.

Эй, Çӳлти Турă, Аслă Турă, Чăваш Турри! Çĕр çинче пĕр пек курăк çук, пĕр пек йывăç çук, пĕр пек çын çук, пĕр пек халăх çук. Кашнин хăйĕн сăн-сăпачĕ, чунĕ, хăйне сыхлакан Турри. Чăваш çыннин те çавах.

Эй, ман Туррăм! Сана кӳрентерекен сахал мар тупăнчĕ. Эсĕ пĕртен-пĕрре пулса пирĕн пата тĕрлĕ ятпа килтĕн. Санран: Хĕвел турринчен, Уйăх турринчен, Çĕр турринчен, Шыв турринчен кулчĕç! Хăйсен турри çын евĕрлĕ пулнипе мухтанчĕç. Чăваш шутлать урăхла: çын вăл нихаçан та Турă шайне çĕкленеймест. Çынран Турă тума кирлĕ мар. Чăваш Турри хăйнеевĕр – кашнине пурнăç парса пулăшса пыракан, усалран сыхлакан хăват, халăх хӳтлĕхĕ, тĕрекĕ. Чăваш валли Чăваш Турри пур.



О, Всевышний, о, Господи, о, Великий Бог Чувашский! На земле нет одинаковой травинки, однообразного дерева, похожих, как две капли воды, людей, совершенно подобных друг другу народов. У каждого свой образ и лицо, свой дух и своя душа, оберегающий и защищающий народ свой Бог.

О, мой Бог! Кто только не посягал на твою честь; из-за того, что будучи единым, ты явился к нам разноименным, глумились над Богом Солнца, Богом Луны, Богом Земли, Богом Воды, кичась и восхваляя своего, человекоподобного бога. Чуваш мыслит по своему: человеку вовеки не дано вознестись до уровня Бога. Да и не следует, чтобы из простого смертного сотворили кумира в лице Всевышнего. Чувашский Бог другой - каждому дарующий и дающий силы, добро, оберегающий от зла, являющийся защитой и опорой своему народу. Для чуваша существует Чувашский Бог.



Эй, тӳрĕ Туррӑмӑр! Эсĕ пире ӗмӗр-ӗмӗр ӗненӗве, ӗмӗте, юратӑва чӗрере упраса ырлӑх çулĕ çине тухма вӗрентсе пыратӑн, вӑйна-хална шеллеместӗн. Эпир вара Сан пархатарна тивĕç çынсем пулаймарӑмӑр.

Нумай шутларӑм, пуçӑма ватрӑм: мĕншĕн-ха çакӑ çутӑ тĕнчере телейсĕррисем çав тери йышлӑн? Пĕрисем каларĕç – шӑпамӑр çапла, теприсем – саманана хурларĕç. Эпĕ вара шутлатӑп урӑхла: чи телейсĕррисем Сана, хамӑр Туррӑмӑра маннисем. Ун пеккисен мулĕ те, сумлӑ ячĕ те пулĕ, телейĕ – айккине тӑрса юлĕ.

Ырӑ Туррӑмӑр, Сан тивлетӳсĕр эпир нихӑçан та пархатар курас çук.

О, Боже правый! Не жалея сил и не щадя Себя, сохраняя Веру, Надежду, Любовь, ныне, присно и во веки веков учил и учишь нас идти путем благоденствия. Мы же оказались недостойными Твоего благорасположения.

Не раз размышлял и задумывался: почему нас, униженных и обделенных, так много на этом белом свете? Одни тешили себя тем, что такова наша участь, другие утверждали, что на нашу долю выпало такое время. Я же считаю иначе: самые несчастные - это те люди, которые всуе забыли Тебя, нашего Бога. Такие могут нажить себе добро, согреться в лучах славы, но счастье обойдет их стороной.

Боже Ты наш праведный и добродушный, без Твоей благодати нам никогда не стать счастливыми и благородными.

Эй, Чăваш Турри! Камсем-ха вĕсем Сана кӳрентерекен йĕксĕксем?

Сана тиркеççĕ, Сана сивĕлеççĕ чăвашлăхран пăрăннисем, тăван халăхне маннисем, усал ĕçпе çылăха кĕнисем, урăх халăх туррине пуççапакансем. Çын вăл çапла: мĕн чухлĕ çылăхĕ нумайрах, çавăн чухлĕ Турăран аяккарах. Ăна Турă кирлĕ мар. Эсĕ çук пулсан яваплăх та çук, иртĕхсе пурăнма ирĕклĕ. Ăшра усал сывлăш хуçаланать, çынлăх манăça юлать. Сана ĕненмен çын кĕçех Эсрел чурине çаврăнать.

О, Чувашский Бог! Кто же те мерзавцы, унижающие Тебя? Тобой гнушаются, Тебя порочат. Порочат те, кто старается открещиваться или отстранился от чувашского идеала и дела, кто забыл и предал родной народ, кто молится чужим богам. Сущность человеческая такова: чем больше у него грехов, тем дальше отдаляется от Бога. Такому Бог не нужен. По его логике, если Тебя нет, значит, нет и ответственности, вольготней жить распутной жизнью. В его душе дьявольский дурман, человечности нет места. Не верующий в Тебя вскоре превращается в слугу Сатаны.

Эй, Турă! Эпир Сан умра айăплă. Çапах Сан ырлăхна, юратăвна тивĕç. Пирĕн урăх Турă çук, Санăн та урăх халăх çук. Эпир те, Эсĕ те пĕр хуйхăпа, пĕр асаппа, пĕр савăнăçпа пурăнатпăр. Тивĕçех мар пулсан та, Сан çумра хŭтлĕх шыратпăр. Каçар пире, айван ачусене. Хăв хăватна ан шелле, хаярлăхна ан пусар, халăха сиенлекен сутăнчăксене ан хĕрхен. Çунтар вĕсене, пĕтер вĕсене, пурлăх сăптăрса пирĕнтен кулса пурăнакансене. Çавсене пулах пĕрлĕх çук. Тĕп ту вĕсене. Ŭтне те чăваш çĕрĕ ан йышăнтăр, выçă çăхансем, йытăсемпе шакалсем çисе яччăр. Сан хаярлăху ытларах усал вăйсем валли пултăр.

О, Бог! Пусть даже мы пред Тобою виновны, все же достойны Твоего благоденствия и Твоей любви. У нас нет иного Бога, у Тебя тоже нет другого народа. И мы, и Ты живем одними невзгодами и горестями, одними благами и радостями. Пусть и не во всем достойны Тебя, все же в Тебе ищем защиту. Прости нас, своих несмышленых детей. Не жалея Своего могущества, не усмиряя Своего гнева, беспощадно карай тех, кто, зубоскаля, грабит народ, предавая его интересы, наносит ему урон. Из-за таких и нет единства в народе. Покарай их, пусть их прах не примет земля чувашская, пусть их склюют вороны и, растерзают кровожадные псы и шакалы. Твой гнев пусть обернется против темной силы.

Эй, Чăваш Турри! Эпир кунта пурте чурасем, урăх турă тарçисем. Пирĕн пурнăçăмăр хамăршăн мар, ытларах ют çыншăн. Пире касрĕç, вакларĕç, пайласа пĕтерчĕç. Эпир халĕ сапса янă пăрça пек. Пирĕн сурансем паян та юнăхса тăраççĕ. Чулман, Çарăмсан, Сĕве, Çавал, Атăл тăрăх шыв мар, пирĕн куççулĕ юхать.

Эй, Турăçăм, хăçан пире пĕрлештерсе пĕр халăх тăвăн-ши, пĕр тĕллевпе, пĕр ĕмĕтпе пурăнма вĕрентĕн-ши? Хĕрхенсем пире, айвансене, чуралăх туйăмĕнчен хăтăлма пĕлменскерсене. Ан пăрах пире, пулăш пире, тĕрек пар пире. Сансăр пуçне хута кĕрекен пулас çук.

О, Чувашский Бог! Все мы здесь рабы, слуги чуждого нам бога. Наша жизнь принадлежит не нам, а чужим людям. Нас резали, кромсали, раздробляли. Нас рассыпали, как горох. Наши раны кровоточат и поныне. Ветлуга, Черемшан, Свияга, Цивиль, Волга полнятся не водицей, а нашими слезами.

О, Боже, когда же объединив нас, создашь единый народ, научишь нас жить единой целью, единой мечтой? Пощади нас, неразумных, неспособных освободиться от чувства рабства и покорности. Не покидай нас, помоги нам, будь опорой. Кроме Тебя за нас никто не заступится.

Эй, Чăваш Турри! Каçар пире. Улталаннă эпир. Хамăра пăхăнтарнă халăх хыççăн кайса телейлĕ пулатпăр тесе шутланă. Шаннă кайăк йăвара пулмарĕ, ырлăх çулĕ çине ӳкеймерĕмĕр. Йышлă халăх ăслă пуль тенĕччĕ. Çук, хăй те арпашăнса кайрĕ; ыттисене хĕстерекен халăх телейлĕ мар иккен. Ăна хисеплеми, курайми пулчĕç. Хăвна пусмăрлакана ăçтан юратма хал çитерĕн.

Эй, Чăваш Турри, ан пăрах пире. Çын хыççăн кайса хамăр çула çухатрăмăр, Сана кӳрентертĕмĕр. Каçар пире, мĕскĕнсене. Эсĕ хăвăн айван ачусем çине хаярлăх ярсан та, эпир ăна юратса çапни вырăнне кăна йышăнăпăр. Ашшĕ ачисене тăна кĕртсе илни япăх япала мар.



О, Чувашский Бог! Прости нас. Мы обманулись, думали, что, пойдя за покорившим нас народом, будем счастливы. Наши чаяния не оправдались, мы не смогли выйти на стезю благополучия. Надеялись на разум многочисленного народа. Ан нет, он сам запутался: оказывается, народ, поправший свободу других народов, никогда не будет счастливым. Его перестали уважать и даже пренебрегают им. Действительно: как же полюбишь того, кто покорил тебя силой?

О, Чувашский Бог, не покидай нас. Следуя за чужаками, мы потеряли из виду свою дорогу. Тебя оскорбили. Прости нас, горемычных. Пусть даже Ты и нашлешь на своих неразумных и заблудших детей Свой гнев, мы это воспримем как должное. Разве не богоугодное это дело, когда отец из любви к своим чадам и, желая им добра и благоденствия, пристраивает своих детей.



Эй, Аслă Турă! Пирĕн çылăх çӳпçи калама çук пысăк. Ма тесен аттемĕрсен çылăхĕ те пирĕн çине капланса ӳкрĕ. Тӳсмелле ĕнтĕ. Санран çăмăллăх ыйтмастпăр, тĕрĕслĕхе тĕпе хурса суд ту пире, тăна кĕрт, урăлтар. Эпир пурне те чăтса ирттерме хатĕр. Пирĕн халĕ пĕртен-пĕр тĕллев – нумай çул хушши пухăннă çылăха ачамăрсене парса хăварса вĕсен пурнăçне йывăрлатас марччĕ.

Эй, Аслă Турă, тасалăва пирĕнтен пуçласам, кăвар çинче çарран ташлаттарса чунăмăрти усал сывлăша силлесе кăларсам. Тасалу çулĕнчен пăрăнакан чăвашсем тупăнсан, вĕсене ан хĕрхен. Сана хирĕçле çын нихăçан та телейлĕ пулаймĕ, упăшкасăр е арăмсăр тăрса юлĕ, ачисем тарса çӳрĕç, ячĕ те пĕр сыпăкранах çĕр çинчен çухалĕ.

О, Великий Бог! Укладка наших грехов невообразимо огромна. Ибо и грехи наших отцов взвалились на наши плечи. Надобно стерпеть. Поблажек у Тебя не просим, суди нас по справедливости, вразуми нас, протрезви. Мы готовы стерпеть все муки. У нас теперь одна единственная цель – не отягчать судьбы наших детей, оставляя им свои грехи, накопленные нами на протяжении многих лет.

О, Великий Бог, очищение начни с нас, заставляя плясать на горящих углях, вытрави из наших душ злой дух. Ежели найдутся чуваши, не желающие очищаться, не пощади их. Человек, идущий против Твоей воли, никогда не будет счастливым, останется вдовцом или вдовой, дети ударятся в бега, а его имя уже через одно поколение исчезнет, забудется.

2. Заказ № 944.

НАЦИОНАЛЬНАЯ БИБЛИОТЕКА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ
И-39678

Эй, Турă! Тем чухлĕ çине тăрса аксассăн та, вырмалли сахал. Чăвашлăх анинче ытларах пуш пучах кăна. Начарланса çитнĕ эпĕр, ĕлĕкхи улăплăх та сĕвĕрĕлсе пĕтнĕ, хĕç тытма та маннă. Кун пекех пулсан умри çутă пачах сӳнес хăрушлăх пур: таврана хура пĕлĕт хупласа илĕ те пĕрне-пĕри паллайми пулăпăр, чăваш камне манăпăр.

Эй, Турăçăм, Санăн пулăшăву пире паян кирлĕ, ыранхи – кая юлни пулĕ. Вăхăтра панă пулăшу пĕчĕкçĕ кăна та, çапах юлса панă пысăк пулăшуран пахарах. Çав тери йывăр пире. Шăтăксене те алтса хунă, хамăрах чавтарчĕç; тĕксе ярас текен те кĕтӳпех. Тӳнсе кайсан тăпрапа витме хатĕррисем те чăвашсемех, тăшман çумĕнче йăпăлтатса тăраççĕ.

Эй, Туррăм, эсĕ малтан çавсене асăрха, шалкăм çаптарса аллисене кĕреçе тытайми ту. Мана вара çав шăтăка тăшмана тĕксе яма пулăш.

——— ✡✡✡ ———

О, Бог! Как бы усердно мы не сеяли, почти нечего пожинать, на ниве чувашской идеи и дела один пустоцвет. Мы совсем захирели, улетучилась удаль Улыпа, забыли как меч в руках держать. Если и дальше так продолжится, то есть реальная угроза полнейшего исчезновения чуть брызжущего впереди света: нас могут наглухо обступить черные тучи и мы будем не в состоянии распознать друг друга, напрочь забудем свое чувашское происхождение.

О, Боже, Твоя помощь нам необходима сегодня, завтра она может опоздать. Своевременная помощь, пусть даже незначительная, важнее внушительной, но запоздалой поддержки. Нам донельзя тяжело. Для нас и могилы уготованы, самих же вырыть заставили, а людишки, жаждущие нас столкнуть в ту яму, стоят толпой. Толпятся и другие,– к сожалению, те же чуваши! – заискивая перед нашими врагами, готовы в тот же миг нас засыпать землей.

О, мой Бог, упреди их, парализуй, не дай им взяться за лопаты. Мне же дай силы сокрушить врагов и сбросить их в ту яму.

Эй, Чăваш Турри! Эпир, Сана пăхăнма маннă çынсем, çак ырă ĕçе мĕнле тумаллине те пĕлместпĕр вĕт-ха; ăс пар пире, вĕрент пире. Сан умăнта эпир упаленсе çӳренĕ хыççăн тин çеç ура çине тăнă ача евĕр кăна. Чунăмăр та пирĕн хамăрăн пек мар, урăх турă хуçаланни сисĕнет. Мĕнле пурăнмаллине те вăлах вĕрентсе пычĕ. Çи-пуçăма якатрăмăр, капăр çуртсем лартрăмăр, чун тасалăхĕ пирки шутламарăмăр, пĕр-пĕринпе çапăçса, ĕçкĕпеле иртĕхсе чăваш йăхне хавшатрăмăр, шуйттан чури пулса тăтăмăр.

Эй, Туррăм, чăваш чунне тавăрса парса хăвна пăхăнма вĕрент пире, сапаланса кайнă сурăхсене. Пире паян Аслă Кĕтӳçĕ кирлĕ.

О, Чувашский Бог! Мы, забывшие о покорности Тебе, даже не разумеем, как сотворить нам это благородное дело; дай нам здравый рассудок, вразуми нас. Пред Тобой мы, как малые дети, только что научившиеся ходить. Да и душа у нас не похожа на свою, полна бесчинства чуждого нам бога. Он же и учил нас житью-бытью. Научились красиво одеваться, строить добротные дома, только вот не помышляли мы о чистоте своей души; ссорясь друг с другом, прозябая в пьянстве, ослабили мы род чувашский, стали мы рабами Сатаны.

О, наш Бог, возвращая нам чувашскую душу, научи нас, заблудших овец, поклоняться Тебе. Нам сегодня просто необходим Старший Гуртовщик.



Эй, Чăваш Турри! Сана хурлакан, Санран кулакан нихăçан та мана сывăх çын пулас çук. Эпĕ вĕсенчен йĕрĕнсе кăна иртсе каятăп. Хăрушă вĕсем, ӳтĕнчен сивĕ тапса тăрать, куçĕнчен – хаярлăх, чĕлхинчен – наркăмăш. Савăнăçĕ те вĕсен пĕрре кăна – чăваша сăхса суранлатасси. Вăйлисенчен вара ая ярасла хăраççĕ. Вĕсемшĕн чи лайăххи – айван та сутăнчăк чăваш; çавна мухтаççĕ, çĕклеççĕ, чаплă пукан çине лартса хăйсен юррине юрлаттараççĕ; чăваш чăвашпа хирĕçнине курсан, çапăçу çулăмĕнче çунса кайччăр тесе юман вутти пыра-пыра пăрахаççĕ. Урăхлараххисем те çук мар: йăл-йăл кулса калаçаççĕ, чăваш хутне кĕрем пекки тăваççĕ, халăх тунă пурлăха Мускава е Хусана ăсатса пурăнаççĕ. Укçи ăçта кайнине эпир нихăçан та пĕлес çук. Çак çынсене, паллах, Чăваш Турри кирлĕ мар. Вĕсен чунĕ тахçанах çичĕ юта сутăннă. Ан хĕрхен Эс вĕсене, пуянлăхпа чыхăнма укçа мурĕ ярса пар.



О, Чувашский Бог! Тот, кто скверно говорит о Тебе, кто глумится над Тобой, тот никогда не станет близким мне человеком. Презирая таких, я пройду стороной. Ибо они ужасны: от их тела обдает холодом, в глазах у них – жестокость, на языках – отрава. Их единственная радость – заклевать и изранить чуваша. А сильных чувашей они боятся как черт ладана. Для них высшее благо – оболваненный и продажный чуваш; таких хвалят, возвеличивают, и подсаживая на трон, заставляют петь их песни. А ежели увидят дерущихся чувашей, то, чтобы те скорее сгорели в огне вражды, подливают масла. Есть и другие: мило улыбаются, поддерживают разговор, вроде, заступаются за чуваша, а сами, нажитое народом добро, с выгодой для себя отправляют то в Казань, то в Москву. И никогда нам не узнать: где и в каком количестве оседают их барыши. Этим людишкам, конечно же, Чувашский Бог не нужен. Их душонки давно выкуплены чужаками. Не щади Ты, Боже, таких сибаритов, пусть подавятся богатством и деньгами.

Эй, пурне те курса тăракан Туррăмăр! Сана хисеплемен, Санран хăраман çынран тем те кĕтме пулать. Вăл хăйне пăхса çитĕнтернĕ çынна та тытса силлеме хатĕр. Çакăнтан япăххи, çакăнтан ирсĕрри пулас та çук.

Çынсем, паллах, кураççĕ, чыс çуккине пĕлеççĕ; кашниех ăшра суд тăвать, тĕлĕннине пĕлтерет. Анчах çын сăмаххи çынна тӳрлетеймест. Сан тĕрĕслехӳ, Сан хăвату кăна пурне те вырăна лартма пултарать. Эсĕ аслă, Эсĕ вăйлă, пĕр Сана кăна шанатпăр.

О, Всевидящий наш Бог! От человека, не почитающего Тебя, не прислушивающегося к Тебе, можно ожидать что угодно. Он с легкостью, не задумываясь, может вытрясти душу человека, взрастившего его самого. Страшнее и ничтожнее этого ничего не бывает.

Люди, конечно, видят все это, знают, что от такого нет прока, каждый в глубине души осуждает его пороки, удивляется. Но людские слова до людей перестали доходить. Только Твоя Правда, только Твое Могущество способны всех поставить на свое место. Ты – Велик, Ты – Всесилен. Только в Тебя и веруем!

Чăваш Турри – тĕрĕс Турă. Эпир çынлăха çухатнăшăн, намăса манса вăрăпа, ĕçкĕпе иртĕхнĕшĕн Туррăмăр айăплă мар. Хамăр япăх çынсем пултăмăр: чĕремĕрсем – усал йăви, пуçăмăрсем – тăшман чури. Пире пулăшма та май çук, хамăра ырă сунакансене те ăнланмастпăр, йышăнмастпăр. Ăслă та сăваплă çынран пăрăнатпăр. Пире усалли, хаярри, хамăра нухайккапа хĕртсе тăраканни çывăх. Ма тесен эпир ырă та ирĕклĕ пурнăçа курман. Пирĕнпе паян пуканелле выляççĕ, пĕр-пĕринпе хирĕçтереççĕ, чăвашсене хăйсен ăслă ывăлĕхĕрĕнчен пăра-пăра яраççĕ.

Хăйĕнчен хăй ютшăнакан чăваша Турă та пулăшаяс çук. Ырлăха пархатарлăн йышăнма çынлăх кирлĕ.

Чувашский Бог – справедливый Бог. В том, что мы, забыв про честь и достоинство, ударились в воровство и пьянство, наш Бог не виновен. Мы сами оказались исчадием ада: сердца стали источниками зла, головы – орудием врага. Нам и помочь невозможно, мы не понимаем и отталкиваем тех, кто нам протягивает руку помощи. Сторонимся мудрых и добрых людей. Нам стали ближе те, кто зло и жестоко плеткой понукает нами. Ибо мы не видели свободной и счастливой жизни. Нами сегодня управляют как марионетками, сшибают лбами друг с другом, мудрых и здравомыслящих сынов и дочерей чувашей стремятся разъединить любой ценой.

Отчуждающихся от себя чувашей и Бог не в силах помочь. Чтобы принять благоденствие, нужна человечность.

Эй, Турăçăм! Мĕншĕн пирĕн ăраскалăмăр çапла пулчĕ-ши? Нивушлĕ Сан умăнти çылăхăмăр çав тери пысăк? Мĕншĕн вăхăтра хута кĕреймерĕн?

Халĕ эпир кам? Ытти халăхсене йышланма пулăшакансем кăна. Кашни çулах ытти халăхсене пиншер ывăл-хĕр паратпăр; тав сăмахĕ вырăнне вара чăвашлăхшăн çунакансене чукмарпа тăрслаттарнине кăна куратпăр. Ыттисем енне туртăнса чылайăшне пулăшрăмăр, пĕтесрен çăлса хăвартăмăр.

Пирĕн пурнăç сĕткенне ыттисем ĕмсен те типсе лармарăмăр, ята çухатмарăмăр. Тĕлĕнмелле халăх эпир, донор шутĕнче пулсан та тытăнса тăратпăр. Нумайлăха-ши? Ырă Туррăм, Санпа килĕшӳллĕ пурăнсан ĕмĕр вăрăм пулассине пĕлетĕп-ха. Çакна ыттисем тавçăрса илейĕç-ши?

О, наш Бог! Почему нам выпала такая участь? Неужели наш грех пред Тобой так велик? Почему вовремя не заступился за нас?

Кто мы теперь? Всего лишь индивидуумы, способствующие увеличению численности других народов. Ежегодно чужакам «дарим» тысячи детей; вместо благодарности видим оскорбление и унижение тех патриотов, которые радеют за чувашей. Приняв иную веру, мы спасли другие народы от исчезновения.

Сколько бы мы ни питали своими соками корни родословного древа других народов, сами не иссякли, не опозорили свое имя, держались достойно. Удивительный мы народ, будучи донорами, все еще держимся. Но насколько нас хватит? Если будем жить в согласии с тобой, то знаю: век наш будет долгим. Но поймут ли это мои сородичи?



Эй, Турă! Пулăш пире, ертӳçĕсĕр, патшасăр тăрса юлнă халăха. Сапаланса кайнă кĕтӳри пек кашни утать хăй çулĕпе, анчах телейне тупĕ-ши?

Пур-ха йăх пуçлăхĕ Улăп, анчах паян пирĕнпе мар. Вăл вилĕмсĕр. Амансан та ӳчĕ хăвăрт тӳрленет. Таçта вăрттăн çĕрте пирĕн тăшмансем Улăп çумне çывăрттаракан курăк хурса тăраççĕ. Çавăнпа вăл тăраймасть, пире пулăшма килеймест. Вăл пур чухне эпир ирĕклĕччĕ, сывлăхлăччĕ, илемлĕччĕ; эрехпе те иртĕхмен, вăрă ĕçне те пĕлмен. Эпир пулнă хамăр пек.

Эй, ырă Аттемĕр, вăрат хăвăн чи паттăр ывăлна, çĕршер çул хушши çывăракан Улăпа. Эпир ăна итлĕпĕр, кар! тăрса ун хыççăн утăпăр.

О, Бог! Помоги нам, оставшимся без предводителя и государя. Как в разбредшемся стаде, каждый идет своим путем, но найдет ли свое счастье?

Есть прародитель рода – Улып, но сегодня он не с нами. Он бессмертен, его рана быстро заживает. Где-то, в потаенном месте, наши враги к изголовью Улыпа подкладывая сон-траву, одурманивают его. Поэтому он пока не может встать и не в состоянии нам помочь. Доколе он был с нами, мы были свободными, здоровыми, пригожими; не знали пьянства и воровства. Мы были самими собой.

О, добрый наш Отец, разбуди своего славного сына, который беспробудно спит уже веками. Мы повинуемся ему и все, как один, пойдем за ним.



Эй, Туррăм! Эсĕ мана мĕн пуррипе çырлахма вĕрентрĕн, ырă туйăм парнелерĕн.

Ыттисен пуянлăхне, чапне ăмсанмарăм. Хам пурнăçа хамах йĕркелесе пытăм: сухаларăм, акрăм, кĕркунне вырса пуçтартăм. Вырнă чухне савăнтăм, ĕçĕмре хам сăнăма куртăм. Ытларах чун çимĕçĕ ӳстертĕм, çынсене парнелерĕм. Ырă кăмăллисем савăнчĕç, тав сăмахĕ каларĕç. Пĕрисем вара куç умĕнче ырларĕç, иртсе кайсан – хурларĕç, кĕвĕçрĕç. Камсем çапла тетĕн-и? Хăйсене хăйсем мухтаса калаçакансем.

Эй, Туррăм, тĕрĕслĕх Хуçи! Чăнлăха та Санра çеç куратăп, ĕçĕме кура хакласса шанатăп.

О, наш Бог! Научи меня довольствоваться тем, что имею, одари меня добрыми чувствами.

Я не зарился ни на чужое добро, ни на чужую славу. Свою судьбу обустраивал сам: пахал, сеял, по осени собирал урожай. Во время жатвы радовался результатам своего труда. В основном выращивал плоды души и дарил их людям. Добродушные радовались, выражали благодарность. Другие хвалили, но за глаза, завидуя, хулили. Кто же они такие? Это самодовольные эгоисты.

О, Бог наш, Владыка Справедливости! Правду нахожу только в Тебе, надеюсь на Твою достойную оценку моего скромного труда.

Эй, Турă, каçар пире. Пурăнма пĕлеймерĕмĕр, пĕрне-пĕри сивлесе сиен кăна турăмăр. Пире хамăртан ыйтмасăрах çапăçăва кĕртсе ячĕç, пурлăх туртса илме, çын вĕлерме вĕрентрĕç. Турăсăр çĕршыв тăватпăр тесе таса чунсене хĕн кăтартрĕç, ашшĕпе ывăлне, пиччĕшпе шăллĕне хирĕçтерсе ячĕç, çын пурнăçĕ йӳнелсе пычĕ, ниме тăман япала пек кăна тăрса юлчĕ. Хура халăх валли ниçта та хӳтлĕх çук. Патшалăх ырлăхĕ чăваша ĕçлеттерсе пуякансем валли кăна пулчĕ. Эпир паян хамăр килте те хуçа мар, кăкăр туллин сывлама та, çăвар туллин калаçма та ирĕк çук. Эй, Туррăм, пуçăмăра çĕклеме, хамăрăн патшалăха туса хума вăй пар пире.

О, Боже! Прости нас. Не сумели жить должным образом, оплевывали друг друга, вредили друг другу. Не считаясь с нашим мнением, нас втянули в войну, нас научили обирать других и убивать людей. Торжествуя, что создаем страну без бога, невинные души обрекли на мучения, отца – с сыном, брата с братом столкнули, жизнь человека стала настолько дешевой, что гроша ломаного не стоит. Для простолюдина нигде нет защиты. Блага достаются тем, кто наживается, эксплуатируя труд чувашей. Мы сегодня даже в собственном доме не являемся хозяевами, вздохнуть полной грудью, говорить во весь голос у нас нет свободы. О, Бог мой, с гордо поднятой головой создать свое государство дай нам силы.

Эй, Турă! Ирсĕр çынна суд тума Сан хăвату çитетех. Çакна куртăм хам куçпах, çывăх çыннăн шăпинчех.

Итлемерĕ вăл мана, пит çăмăллăн пăрăнчĕ хамăр халăх йăлинчен. Чăваш юрри янрамарĕ, чăваш ташши курăнмарĕ унăн шавлă туйĕнче. Амăшĕ чăвашла пил панине кинĕ ăнланмарĕ, ватă çыннăн сăмахне итлекен те пулмарĕ. Шăпах çавă саманта ывăлне вăл çухатрĕ, чĕри хытă ыратнипе куçне шăла-шăла тухса утрĕ килнелле. «Асанне» текен мăнуксем çав çемьере курăнмарĕç. Пурăннăçем ашшĕ те тухса пычĕ хисепрен. Тем пек çине тăрсан та чăрсăр ӳсрĕç ачисем, çурма вырăс пулнишĕн пăшăрханчĕç кунсерен, ашшĕ панă ырлăха пĕлеймерĕç хаклама, час вĕренчĕç усала. Пĕри ларать тĕрмере, тепри ялан ĕçкĕре. Пурнăç çапла такăннишĕн арăмĕ айăплать упăшкине, начар йăхран пултăн тесе хурлантарать кашни кун. Çапла кирлĕ те ăна, йăхне маннă чăваша.

О, Боже! В Твоей власти осудить ничтожного человека. Наблюдая за судьбой одного чуваша, пришлось мне быть свидетелем тому.

Не внял он моим советам, с легкостью отвернулся от наших народных традиций и обычаев. На его свадьбе не были слышны чувашские песни, не было видно чувашских плясок. Благословение его матери на чувашском языке сноха не поняла, слова старого человека никто и слушать не захотел. Именно в этот момент она потеряла своего сына, с болью в сердце и со слезами на глазах она поспешила домой. Внуков со словами «азанне» в той семье не было. С годами и отец потерял уважение. Как бы он ни тщился, его дети подросли грубиянами. Они, полурусские, не радовали ни русских, ни чувашей, не восприняв добродетель отца, выросли злыми и жестокими. Теперь один – в тюрьме, другой, забулдыга, – в дерьме. Из-за таких жизненных неурядиц жена ежедневно бранит мужа, якобы он не из благородного рода. Так и надо, поделом ему, забывшему свой род чувашу.

Эй, Турăçăм! Хăв халăхна чăтăмлăх пар. Чăвашăн тĕнче умĕнче парăм çук: çын аллинчи çăкăра туртса илмен, вутпа-хĕçпе пусмăрласа ыттисене нуша кăтартман, хăй килĕнчен хăваласа яман, вăрçассине мар, ĕçлĕ пурнăçа мала хунă. Çавăн пек пулма пире Эсĕ туса янă. Анчах темшĕн тĕнчере чăваша ăнланас текен сахал, унăн ырă кăмăлне асăрхамарĕç, пурăнма вĕрентрĕç урăхла, чăрсăр халăх йăлипе. Усалланса пытăмăр, эрех ăшне путрăмăр, ярса паракансене ырласа мухтав юрри юрларăмăр. Хăй халăхне эрехпе шăваракан патшалăх пире валли мар, вăрçăпа алхасакан халăх пирĕн тус мар.

Эй, Турă, çавăн пек кӳршĕсене пирĕнтен пăрса яр. Пĕтер вĕсене. Пире хамăр пек пурăнма пулăш, хамăршăн кĕрешме вăй-хал пар.

О, Боже мой! Дай терпение своему народу. У чувашей перед миром долгов нет: кусок хлеба из чужих рук не отбирали; мечом и огнем покоряя другие народы, беспощадно не измывались над ними, не изгоняли их из родимых домов; не военную агрессию, а мирную жизнь ставили во главу угла. Ты нас создал такими. Но почему-то чувашей мало кто понимает, их добрый нрав не замечают, хотят, чтобы мы жили по-иному, по обычаям воинствующего народа. Чтобы становились все злее, пристрастились к спиртному, а для тех, кто наливает, пели дифирамбы. Государство, спаивающее свой народ, не для нас, воинствующий народ нам не друг.

О, Боже, избави нас от таких соседей, помоги нам жить по своим обычаям, дай нам силы постоять за себя.

Эй, Чăваш Турри! Сан умăнта сăмах чĕнме хăюлăх ситернĕшĕн каçар мана. Чăтаймарăм, никам каламаннине калас терĕм. Турăсене, халăхсене хирĕçтерсе яракансем эпир мар. Пирĕн ун пек йăла çук.

Хăй Туррине мала хуракансем пулчĕç еврейсем. Ютран тапса килсе вырăнти халăха хĕсрĕç, çĕрне туртса илчĕç. Мĕншĕн çапла тăватăр тесен, эпир Турă суйласа илнĕ халăх çыннисем терĕç. Çак сăмах ыттисене килĕшмерĕ. Ма тесен Турă суйласа илмен халăх çук. Кашни халăхăн хăйĕн Турри пур. Пире вара Эсĕ суйласа илнĕ. Санран асли, Санран ырри пирĕншĕн урăх никам та çук. Чăваша сыхлать Чăваш Турри. Эпир Сана шанатпăр, Санран хŭтлĕх кĕтетпĕр. Йăнăш утăм тусассăн, Эсĕ пире ан хĕрхен, хăватна ярса вĕрентсе ил.

О, Чувашский Бог! Прости меня за то, что осмелился замолвить слово перед Тобой. Не стерпел, высказался о том, о чем никто не осмелился даже заикнуться. Не мы настраивали друг против друга богов и народы. Такого зла в нас никогда не было.

Своего бога выше всех поставили имяреки. Собравшись из разных стран, вытеснили аборигенов, отняли у них земли, кичились, будто они – Богом избранный народ. Эти слова не по душе пришлись другим. Ибо нет народов, не избранных Богом. У каждого народа есть свой Бог. Нас же, чувашей, избрал Ты. Выше Тебя, благороднее Тебя для нас никого нет. Чуваша бережет Чувашский Бог. Мы верим в Тебя, от Тебя ждем защиты. Если мы оступимся, Ты не щади нас, Своим могуществом как следует проучи нас.

Чăваш Турри, каçар мана. Çамрăк пулнă, айван ӳснĕ, ултавçăсен сăмахне те ĕненнĕ.

Ман умра ют халăх туррине мухтарĕç, хăйсемпе пĕрле ăна кĕлтума чĕнчĕç. Эпĕ васкамарăм, иккĕленсе пурăнтăм. Эсĕ пуррине вара пĕлтĕм каярах. Сăнарăм халăх пурнăçне, ун хуйхипе-суйхине, уйрăм çынсен асапне, ăнлантăм чăн чăвашăн телейне. Ĕнентĕм вара пирĕн хамăрăн Турă пуррине, чăваша Чăваш Турри кăна хӳтĕлеме пултарнине.

Нуши чăвашăн пит нумай. Анчах айăпĕ Санра мар. Айăпĕ пăсăк чăвашсем Сана хирĕçле ĕçсем тунинче.

Чувашский Бог, прости меня. Молод был, наивным рос, к сожалению, внимал и лжецам.

Предо мной восхваляли бога чужого народа, призывали поклоняться и молиться ему вместе с ними. Я не спешил, жил, мучаясь в сомнениях. О Твоем существовании узнал позднее. Наблюдал за жизнью народа, познал его горести, сочувствовал горемыкам, понял, в чем счастье настоящего чуваша. Наконец-то поверил в Твое существование и в то, что нас может защитить только Чувашский Бог.

Чуваш погряз в нужде. Но в этом Твоей вины нет. А виновны те порочные чуваши, которые против Тебя творят зло.

Ман çăвартан киревсĕр сăмах тухман, калама та пĕлместĕп. Ярса панă эрехе те тута патне тытмарăм. Манран кулчĕç, айван вырăнне хучĕç. Пирус туртманни те, эрех ĕçменни те пысăк çитменлĕх иккен. Пĕр кун сиктермесĕр çӳрерĕм ĕçе, ырра, илеме вĕрентрĕм çамрăксене. Мана сивĕлерĕç, хăваласа ячĕç, усалпа тав турĕç. Таса çынран хăрарĕç, суя сăмахпа варалама тăрăшрĕç.

Куртăм эпĕ пуçлăхсем иртĕхнине, улттавпа пурăннине, миххи-миххипе укçа сăптăрнине, тарçисене выçă тытнине. Çакна каларăм хăйсене, уççăн пĕлтертĕм çынсене. Каллех, ав, кулчĕç пĕрисем, ылханчĕç пулĕ теприсем. Анчах чĕрем ман ыратмарĕ, тасалтăм эпĕ йăх-яхран, хама вĕçертрĕм капкăнран.

Эй, Турăçăм! Эсĕ çакна куртăн, ман хута кĕтĕн, тăшман çулне пӳлсе утайми турăн. Çук, эпĕ çакăншăн хĕпĕртеместĕп, хĕрхенетĕп кăна хураюн усалсене.



С моих уст не слетали непристойные слова, их я не смогу произнести. Налитое мне спиртное даже к губам не подносил. Надо мной насмехались, считая наивным простаком. Обучая молодежь, прививая подрастающему поколению чувство добра и красоты, ежедневно, не пропуская ни дня, ходил на работу. На меня смотрели враждебно, осуждали, прогоняли, за добро расплачивались злом. Боясь порядочного человека, всеми фибрами души старались опорочить наветами и инсинуациями.

Мне довелось увидеть бесчинство высокопоставленных чинуш, как они иногда обманным путем хапали деньги мешками, а прислугу свою держали в черном теле. Об этом им, сытым, сказал я при народе. Ухмылки вижу в них опять я, другие шлют мне вновь проклятья. Но в сердце боле нету боли, очистился теперь от грязи, освободился я от мрази.

О, Бог мой! Ты все увидел и познал, меня же под защиту взял, врагам дорогу заказал. Нет, я не злорадствую, мне их, злых и с черной душой, просто жаль.

Эй, Турă! Йышланма пулăш пире, ĕрчевлĕх пар. Хĕсĕр хĕрарăм ан пултăр, арсем сывлăхлă та хастар çитĕннĕр.

Ачамăрсене патшалăхшăн кăна мар, хамăра валли çуратар, ырăлăхпа, юратупа ӳстерер. Пĕр ача вăл ача мар, икĕ ача – çур ача, виçĕ ача – чăн ача. Пирĕншĕн паян кашни ача хаклă, кашни вилĕм пысăк çухату. Ача амăшне мухтар, тав сăмахĕ калар, чăн-чăн чăваш çитĕнтерме пулăшар.

Ырăлăхне Санран ыйтрăм-ха, анчах ăшра канлĕх çук. Пĕрле савăнса пурăнма пирĕн хамăрăн аслă Çĕршыв çук. Чăваш çĕрне касса вакланă, халăхне те пайланă. Пĕр Турăпа, пĕр тĕллевпе пурăнмасăр эпир телейлĕ пулас çук.

Çĕнĕ ăру ӳстерме пире Эсĕ вăй-хал пар, ачамăрсен пуçĕ çине хăюлăх, хастарлăх яр.

О, Боже! Способствуй же приумножению рода нашего, дай плодовитости нам. Чтобы не было бесплодных женщин, чтобы мужчины росли здоровыми и сильными. Чтобы детей рожали не только для государства, а для самих же с тем, чтобы привить в них любовь и добро. Один ребенок – еще не дитяти, два чада – половина ребенка, трое детей – полнокровный ребенок. Для нас сегодня дорог каждый ребенок, смерть одного – невосполнимая утрата. Да возвеличим же мать ребенка, скажем ей слово благодарности, поможем ей вырастить настоящего чуваша.

Прошу Твоего благоденствия, а душа все беспокоится. Для совместной счастливой жизни у нас и Отечества своего нет. Чувашскую землю раздробили, народ разделили. Без единого Бога, без единой цели нам не увидеть лучшей доли.

Дай нам мужества вырастить новое сильное поколение, дай детям нашим отвагу и удаль.

Эй, Турă! Мана тĕрĕс çулпа утма çав тери йывăррине куратăн пулĕ. Пур çĕрте те кĕвĕç чунсем, ура хума хăтланакансем. Мĕн тумаллине те пĕлместĕп. Мĕншĕн хаярлăхăм çав тери сахал-ши? Тен, ăна Эсĕ хушса парăн? Тен, хаяр пулма кирлех те мар? Пĕлместĕп. Ман пĕртте харкашас килмест, çапăçас килмест. Ман ĕçлесчĕ, савăнасчĕ, çут тĕнче илемĕпе, юрату ăшшипеле киленсе пурăнасчĕ.

Эсĕ ман хаярлăха вăйлатсан, эпĕ ăна хам тăшмансемпе çапăçнă çĕре мар, халăх тăшманĕсене тĕп тунă çĕре ярăттăм. Халăхăмăр телейсĕр чухне уйрăм чăваш телейĕ ниме те тăмасть.

О, Бог мой! Ты, конечно же, видишь, как тяжело мне идти по праведному пути. Всюду завистники, готовые в любой удобный для них момент дать мне подножку. Порой и не знаешь: как быть? Почему во мне мало гнева? Может, Ты мне прибавишь его? А, может, и не стоит гневаться? Не знаю. Мне претит раздор. Наслаждаясь прелестью белого света и огнем любви, я хочу трудиться.

Ну, а если Ты прибавил бы мне гнева, то я его использовал бы не в борьбе со своими врагами, а направил бы на врагов моего народа. Когда несчастлив весь народ, то счастье одного чуваша равносильно нулю.

Эй, Турă! Мăйăр, йĕкел паракан йывăҫсене касса тăксан урăх вăрман пулас çук; ачамăрсене сумсăр вăрҫа яни ăрăва сиен кӳни мар-и-ха? Унта вилеҫҫĕ вăйпиттисем, чи сывлăхлисем, чи илемлисем, ача ашшĕ пулса ăрăва вăйлатма хатĕррисем. Вăрҫăран тавраҫҫĕ аманнисем, хăрушлăхра чунне сусăрлантарнисем. Тăшман кулли темшĕн-ҫке ытларах чăваша тивет. Пĕртен-пĕр салтак вилсен те – вăл та пулин чăвашах, ыттисем хушнипеле пуҫне хурать инҫетре.

Пирĕн пурнăҫ йĕркипе вăрҫă пачах кирлĕ мар. Чăваш Турри хушнипе пирĕн паттăрлăх – ĕҫре, пурнăҫ ҫуртне купаланă çĕрте. Анчах пăтранчăк тĕнче ĕҫлет пире хирĕҫле. Ҫурт лартакан чăвашăн мĕншĕн пăшал тытмалла? Манăн ырă халăхăм çын вĕлерме ҫуралман. Каҫар пире, Туррăмăр, çакă чи ирсĕр ĕҫе хамăр ирĕкпе туман.

О, Боже! Если спилить деревья и кустарники, приносящие орехи и желуди, то новый лес листвой не зашумит; разве не то же самое, когда детей наших отправляют на братоубийственную войну? Там погибают самые здоровые, самые красивые, полные сил и энергии парни, которым, став отцами, предстоит продолжить наш род. С войны же возвращаются инвалиды и психически расстроенные люди. Горе по обыкновению выбирает чуваша: если где-то убит хоть один боец, то это, как правило, – чуваш, погибший вдали от родины по воле других.

Укладу нашей жизни война чужда. Волею Чувашского Бога, наша доблесть в труде, там, где строят жилье. Но смутное время действует против нас. Строящий дом чуваш должен ли взяться за оружие? Мой добрый народ не рожден убивать людей. Прости нас, наш Бог, это злодеяние творилось не по нашей воле.

Çын вăл хăйпе хăй самай кăмăллă иккен. Пĕр кахал та хăйне кахал çын вырăнне хумасть, улталакан та, усал тăвакан та çавах: япăх ĕç тăватăп темест. Ĕçке ярăннă çын та хăйне черкке тĕпне путнисен шутне кĕртмест, çынна усал сăмахпа кӳрентерекен те хăйне аванах туять, уншăн намăсимĕс çук. Тепĕр чухне çак çынсемех Турă пирки пуплешеç. Анчах мĕнле Турра аса илеççĕ-ши? Чăвашсенне мар пуль çав. Хамăр Турра ĕненсен çак çынсем тахçанах тĕрĕс çула тухăччĕç. Ун ырлăхĕ пурне те çитет, темле йывăрлăхран та çăлать.



Оказывается, человек по сути своей весьма самодовольное существо. Ни один лодырь не считает себя лентяем, и лгун, и преступник не помышляют о том, что они творят зло. Пьяница также не видит себя на дне рюмки. И тот, кто не стыдясь, грубит и оскорбляет другого, не чувствует за собой вины. Иногда эти же люди поговаривают о Боге, но какого Бога они вспоминают? Наверное, не Чувашского Бога. Если бы они верили в нашего Бога, то давно встали бы на путь праведный. Его благодати хватит для всех. Он в любых трудных ситуациях выручит и спасет.

Эй, Турă! Сан ятна кирлĕ-кирлĕ мар çĕрте асăнса çылăха кĕрес марччĕ. Улталаса е вăрласа тупнă укçапа лартнă пӳртре кĕлтуни, варти пĕчĕк пепкене тухтăр пулăшнипе вĕлернĕ хыççăн сывлăх ыйтни, çын вĕлернĕшĕн суда çаклансан çăлăнăç шыраса тархаслани, тепĕр халăха пăхăнтарса чура тăвас тĕллевпе вăрçă пуçланă патша çĕнтерӳ ыйтни «турă» сăмахпа вылявлă усă курни çеç.

Турă ятне вырăнсăр асăнса хамăрăн ырă Сыхлавçа кӳрентерес марччĕ.

О, Бог мой! Всуе вспоминая Твое имя, не хотелось бы согрешить. Молиться в здании, которое построено на ворованные средства или добытые обманным путем, просить здоровья после того, как при помощи врача в утробе матери погублена жизнь будущего человека, на скамье подсудимых просить пощады после убийства человека, просить победы в войне, затеянной с целью порабощения другого народа, разве не есть заигрывание со словом «Бог»?

Вспоминая всуе имя нашего Покровителя, не обидеть бы Его.

Такама та куртăм, такампа та калаçрăм. Çын вăл хăй пирки япăх шутламасть, хăйпе хăй кăмăллă. Ыттисем ăна мĕнлерех хак пани кăна канăç памасть, яланах çителĕксĕр пек туйăнать, ырланине, мухтанине илтес килет. Анчах халăх пĕтĕмпех курать: хăй патне ырă кăмăлпа çывхарнă çынсенчен мĕн кирлине сăптăрса илнĕ хыççăн вĕсенчен хăвăрт пăрăнса утнине те, тăван пиччĕшне пытарма пыманнине те, пĕрмаях çăхав çырса çынсене тертлентернине те, килĕнче килĕшӳлĕх çуккине те, укçашăн амăшне сутма хатĕррине те...

Çавнашкал çын та, юрату туйăмĕ мĕнлине пĕлменскер, пулать иккен. Мĕншĕн чунĕ çав тери чухăн-ши, сивĕ-ши? Мĕншĕн пурнăçра хăйне çеç курать-ши? Турра пачах маннăран мар-ши?

С кем только не встречался, с кем только не беседовал. Человек о себе дурно и не подумает, он доволен собой. Беспокоит только то, как его характеризуют другие. Ему всегда кажется, что его недооценивают, хочется слышать лестные слова. Но народ все видит: и то, как в корыстных целях воспользовавшись его добротой, резко отворачивается от него, и то, как не приехал на похороны родного брата, и то, что своими гнусными жалобами тревожит покой порядочных людей, и то, что в семье нет согласия, и то, что за гроши может продать родную мать...

Оказывается, есть такой человек, который не знает чувства любви. Почему его душа так скудна и холодна? Почему в жизни он видит только себя? Не от того ли, что совсем забыл Бога?



Эй, Турăçăм! Тавах сана кăштах мана та пултарулăх панăшăн. Эпĕ унпа усă курма пĕлтĕм-ши, пĕлеймерĕм-ши? Анчах пĕрмай тăрăшрăм, пĕр канмасăр ĕçлерĕм, ывăннине пĕлмерĕм. Тăван ялпа хулана, юратнă халăхăма, Чăваш Çĕрне мухтаса юрăсем эп юрларăм, çĕршер-пиншер çамрăка аслă çула кăлартăм. Юрларăм юрату çинчен, ирĕклĕх çинчен, аса илтертĕм çынсене ĕмĕр сакки сарлака та, ĕмĕрĕ пит кĕскине, телей алă çупса тăнă чух, пурнăç çулĕ такăр чух туссене, тăвансене тав тума манмалла маррине, хамăр Улăп йăхĕнчен пулнине, чăваш чысне алла хĕç тытса хŭтĕленĕ паттăрсене яланах асра тытмаллине.

Ырă çынсем çакна йышăнчĕç, тав сăмахне тивĕçрĕм. Тăшмансем вĕчĕхсе çŭрерĕç, ура хума хăтланчĕç – вĕсен ĕç тухмарĕ. Çакă пурте килчĕ эс пулăшнипе. Тавах сана, ырă Туррăмăр!

О, Бог мой! Благодарю Тебя за то, что дал мне скромное дарование. Сумел ли я воспользоваться им или нет? Но старался, трудился без отдыха, не зная устали. Воспел родное село, любимый народ, Чувашскую Землю, тысячи молодых людей вывел на жизненную стезю. Пел о любви, о свободе, напомнил людям о том, что поле жизни широко, а время быстротечно; что надо уметь благодарить родных и близких даже тогда, когда счастье льется через край; о том, что мы из рода Улыпа; о том, что нужно помнить героев, с мечом в руках защищавших честь и достоинство чувашей.

Добрые люди это восприняли с благодарностью. Супостаты шипели от злости, пытались мне подставить ногу, но у них ничего не вышло. Потому что Ты мне помог. Благодарю Тебя, добрый Бог.

Эй, Çӳлти Турă! Пĕтĕм ыррилайăххи Эсĕ пулăшнипе пулса пычĕ. Эпĕ тĕрĕссине каларăм, улталлă ĕç туса чап шыракансене питлерĕм, ылтăнкĕмĕлшĕн сутăнмарăм. Чăн сăмах килĕшмерĕ. Вĕсем выçă çăхан пек пĕр çĕре пухăнса кавар турĕç, ятăма тикĕтпе варалама хăтланчĕç. Анчах ĕçĕ тухмарĕ, хăйсемех çын куллийĕ пулчĕç: пĕрисем тĕрмере çĕрчĕç, теприсене шалкăм çапрĕ, виççĕмĕшсем катăка тухса сӳпĕлтетсе çӳреççĕ, тĕнче асапне кураççĕ. Эх, мĕскĕнсем-чурасем. Мĕншĕнне чухлаççĕ-ши? Чăваш Турри курать çав, таса çынна тапăннăшăн хаярлăхне хĕрхенмест. Çапла пултăр яланах.

О, Всевышний! Все сотворилось с Твоей помощью. Я всем говорил правду в глаза, осуждал тех, кто обманным путем стремился стяжать себе славу, ради золота и серебра не предавался.

Мое правдивое слово задело их тщеславие. Они, словно ненасытные стервятники, коварно накинулись на меня, пытались очернить мое доброе имя. Но у них ничего не вышло, сами же стали всеобщим посмешищем: одни сгнили в тюрьме, других разбил паралич, третьи, выжив из ума, и поныне страдают. Эх, бедолаги. Догадываются ли они: из-за чего терпят эти муки? Чувашский Бог все видит и не пожалеет тех, кто наводит напраслину на честного человека. Да будет так!

Эй, Турăçăм! Ман халăхăма сыхла, ун юнне сăвăс пек ĕмсе пурăнакансене аçа çаптарса çунтар. Ĕçлемен çын сĕтелĕ çинче çăкăр-тăвар ан пултăр. Чăваш хĕрарăмне имçам тунă çĕре кĕрте-кĕрте яраканăн ачи чирлĕ çуралтăр; чăваш аллинчен туртса илнĕ чĕлĕ пырне лартăр; ултавпа пухнă пурлăх такăнтарса пытăр; хуçисене пĕр-пĕринпе хирĕçтерсе чĕр тамăка ăсаттăр.

Эй, Чăваш Турри, çакна Сансăр пуçне урăх никам та тăваяс çук. Эпир хамăр халсăр, чирлĕ çын шайĕнче кăна. Пире кашни кунах алăран çапса тăраççĕ, тепĕр чух – йăхташсем çине тăнипех. Пулăш пире. Санпа пĕрле вăйлăрах пуласса шанатпăр. Тăшманшăн хăв хăватна ан хĕрхен.

О, Бог наш! Сохрани мой народ, а тех, кто, словно клещ, сосет кровь, порази и испепели молнией. Не должно быть хлеба на столе того, кто не работает. Пусть от болезней страдает тот, кто чувашских женщин посылает на производство ядовитых химикатов; пусть подавится куском хлеба тот, кто отобрал его у чуваша; добро, нажитое обманным путем, пусть для таких будет яблоком раздора и обузой; чтобы гореть им в аду.

О, Чувашский Бог, кроме Тебя это никто не сделает. Мы же, как больные люди, немощны. Нас ежедневно бьют по рукам, чаще – по наущению своих же соплеменников. Помоги нам. Вместе с Тобой мы чувствуем себя увереннее. Не пощади врагов наших.

Эй, Турăçăм! Мĕншĕн лекрĕм-ши усал ĕç тума пухăннисем хушшине; мĕншĕн алă çĕклерĕм-ши пултаруллă кавча Турра ĕненекен хĕре юратнăшăн институтран кăларса яма; мĕншĕн хирĕç тăмарăм-ши сывлăх япăххипе колхоз ĕçне тухайманшăн виçĕ ачаллă хĕрарăмăн пахчине касса илнĕ чухне; мĕншĕн нимĕн те шарламарăм-ши ача амăшĕ пулма хатĕр çамрăк арăмсене противогаз тăхăнтарса наркăмăшлă цеха кĕртсе янă чухне? Çилентертĕм эпĕ çакна курса тăракан Туррăмăра.

Усал ĕçе ушкăнпа туса пырасси нимех те мар иккен. Чун ыратăвĕ те сисĕнмест; йăлана кĕрсе пынăçемĕн усал ĕç пек те туйăнмасть.

Эй, Турăçăм, мĕншĕн мана чармарăнши, аллăмран хыт çапмарăн-ши? Пĕр аллине татсан та нимех марччĕ, чунăм таса юлатчĕ.

О, Боже! Почему же я оказался среди злоумышленников; почему проголосовал за исключение из института способного парня за то, что он полюбил девушку, верующую в Бога; почему не защитил колхозницу с тремя детьми, когда у нее отняли часть земельного надела за то, что она, будучи больной, не смогла выйти на работу; почему промолчал в тот момент, когда на беременных женщин, надев противогазы, запустили их во вредный цех? Разгневал я этими поступками, попустительством нашего всевидящего Бога.

Оказывается, когда сообща творишь зло, его не заметно. И боль души отупляется; войдя в привычку, зло не кажется злом.

О, Бог мой, почему не остановил меня, не дал по рукам? Если одну руку искалечил бы, то я это пережил бы, зато душа моя осталась бы чистой.



Эй, Турăçăм! Сана яланах асра тытмалла: хаярлăх капланса килнĕ чухне усал ĕç туса çылăха кĕресрен, савăнăçлă вăхăтра ытлашши иртĕхсе каясран. Çук çав, пурнăç сиккипе пынă чухне Сана часах манатпăр, хамăра Турă вырăнне хума та хатĕр. Кунтан пысăк çылăх çук та пуль. Юрать-ха, хуйхăсуйхă Сана аса илтерсех тăрать, çынна хăй вырăнне лартать.



О, Бог мой! Убедился я, что Тебя надо помнить: чтобы во гневе сотворив злодеяние, не взять греха на душу, чтобы радуясь, не потерять достоинства. Но нет, когда в жизни все идет гладко, без сучка и задоринки, мы зачастую забываем Тебя, а иногда тщимся ставить себя на место Бога. Наверное, это самый большой грех. Хорошо еще, что беды и напасти вынуждают вспомнить Тебя, человека ставят на свое место.



Эй, Турă! Нивушлĕ ман пурнăçăм малашне те хальхи пекех картран тухнă çынсем хушшинче иртсе пырĕ? Халăхĕ йышлă, йĕркеллĕ çын сахал: пĕри ĕçкĕпе иртĕхет, тепри чавса тавăрса ĕçлес вырăнне вăрра çӳрет; пĕри улттавпа пуять, тепри пĕр тенкĕшĕн çын вĕлерме хатĕр; пĕри ачи-пăчине маннă, тепри — ашшĕ-амăшне; пĕри чăваш килĕнче те хăй урăх халăх çынни пулнишĕн каппайланса çӳрет, тепри Чăваш Туррине аса илтерсен куçне чарса тавлашать, чăвашăн хăй Турри пулма пултараймасть тет. Пире чухăнлатасшăн, Турăсăр халăх тăвасшăн, урăх турра пăхăнтарса ĕмĕрлĕхех чура шутĕнче усрасшăн.

Ăçта пурăнатăп-ши вара эпĕ? Чăваш çĕршывĕнчех-ши? Çук, Чăваш Ене паллайми пултăм. Çĕрĕ те, шывĕ те çавах, çыннисем вара пачах урăхла.

О, Бог! Неужели моя жизнь и впредь будет проходить среди тех людей, которые, как и сегодня, переходят все грани приличия? Народу много, порядочных людей мало: один в пьянстве прозябает, другой, вместо того, чтобы работать с засученными рукавами, занимается воровством, один наживается обманом, другой за рубль готов человека убить; один своих детей забыл, другой – своих родителей; один в чувашском доме ходит кичась тем, что он представитель другого народа, другой же при упоминании Чувашского Бога, вытаращив глаза, утверждает, что у чуваша своего Бога быть не может. Нас хотят видеть бедными, из нас пытаются сделать народом без Бога, заставляя верить в чужого бога, нас хотят держать в рабстве.

Где же я живу тогда? Разве в Чувашском государстве? Нет, перестал я узнавать Чăваш Ен. И земля, и воды те же, но люди другие.

Эй, Турă! Хамăра хисеплеме, юратма вĕрент пире. Ют турă хыççăн кайнипе эпир хамăра хамăр çиекен пулса тăтăмăр, йăхташăмăрсене пинĕ-пинĕпе пĕтертĕмĕр: сутрăмăр, тĕрмере пăчлантартăмăр, пере-пере вĕлертĕмĕр. Пирĕн хаярлăх тăшман валли мар, чăваш валли кăна пулчĕ. Ачамăрсене те пăсăк çулпа ятăмăр, ӳссе çитичченех эрех-сăра лартса патăмăр. Ăçтан сывлăхлă пулччăр-ха вĕсем! Чăвашăн халĕ пурĕ те пĕр чир кăна – ĕçкĕпе иртĕхни. Çавна тӳрлетсен пиртен çирĕп, пиртен ăслă халăх та пулас çук.

Эй, Аслă Аттемĕр, пулăш пире сывалма, пурнăç çине урă куçпа пăхма. Ӳсĕр халăхăн пуласлăхĕ çук.

О, Боже! Научи нас уважать, любить самих себя. Идя следом за другим богом, мы начали уничтожать друг друга, тысячи и тысячи соплеменников погибли: их предавали, томили в тюрьмах, расстреливали. Наш гнев мы обрушивали не на врагов, а только на чуваша. Детей своих направили на порочный путь, сызмальства приучали к спиртному. Откуда же им быть здоровыми?! У чуваша теперь единственная болезнь – пристрастие к спиртному. Если излечимся от этого недуга, то сильнее и мудрее нас и народа не будет.

О, Досточтимый Отец, помоги нам излечиться и взглянуть на мир трезвыми глазами. У пьянствующего народа нет будущего.

Эй, Турăçăм! Каллех Сана йăлăнатăп, урăхла май çук. Чăрмантартăм пулсан – каçар.

Эпĕ кăшкăртăм – илтмерĕç, эпĕ каларăм – итлемерĕç. Ман сăмах никама та кирлĕ пулмарĕ: пĕрле утакансене те, пĕрле пурăнакансене те, пĕрле мăшкăл куракансене те... Пĕлӳ те вĕсем валли пулмарĕ. Мĕншĕн çыртăм-ши, мĕншĕн вĕрентрĕм-ши? Пурпĕрех ăссăрсем хуçаланаççĕ, халăха улталасçĕ, айккинелле сĕтĕреççĕ. Манăн вара халĕ куççуль витĕр пăхса хурлăхлă кĕвĕ каламалли кăна юлать. Чăваш пĕтсе пынине курмастăр вĕт-ха эсир! Çын шучĕ пур-ха, анчах халăхĕ çук. Каярах, тен, мана аса илĕр, анчах вилме выртнă чуна чĕртме пулмĕ.

Эй, Турă, çавăн пек хăрушă инкекрен хăтар пире, сыхланса юлма хăват пар. Çакă çутă тĕнчере эпир ытлашши пулас çук, ыттисене чăрмав кӳрес çук.

О, мой Бог! Снова умоляю Тебя, другого выхода нет. Прости за беспокойство.

Я кричал – моему голосу не вняли, я говорил – ко мне не прислушались. Мои слова никому не пригодились: ни моим спутникам, ни моим соседям, ни тем, с кем я делил наши общие обиды... И мои знания им не нужны. Для кого писал, для чего учил? Все равно недоумки верховодят, обманывают народ, добро на стороне транжирят. Мне же теперь, созерцая все это сквозь слезы, остается издавать только минорные мотивы. Вы же не видите того, как постепенно пропадает чуваш! Численность населения имеется, но нет народа. Потом, возможно, вспомните мои слова, но душу во время агонии спасти невозможно.

О, Бог, избави нас от такого страшного исхода, дай нам силы для самосохранения. На этом белом свете мы лишними не будем, другим вреда не причиним.

Эй, Туррăм! Санран ырлăх ыйтакан мансăрах нумай. Ку таранччен парса тăни те маншăн пысăк савăнăç. Ура утать, алă ĕçлет, куçăм курать, хăлхам илтет, пуçăм шухăшлать, чĕрем кăна ыратать, чăваш шăпишĕн ăш вăркать. Енчен те çылăха кĕтĕм пулсан – усал шухăшпа мар, пурăнма пĕлменрен. Хам тăрăшсан, Эсĕ пулăшсан çылăхран тасалăп-ха, кая юлса та пулин тĕрĕс çул çине тăрăп-ха.

Эй, Туррăм, манăн пĕртен-пĕр йăлăну кăна: канлĕ ватлăх пар, вилсен тăшмана ман тупăк умĕнче хĕпĕртесе тăмалла ан ту.

О, Бог мой! От Тебя просящих благоденствия и без меня хватает. Я рад и тому, что Ты дал мне до сего дня. Ноги ходят, руки работают, глаза видят, уши слышат, голова способна думать, только сердце ноет, болит за судьбу чуваша. Если я когда-нибудь и согрешил, то не по злому умыслу, а потому, что жить не умел. Если сам постараюсь, если Ты мне поможешь, то, пусть даже с опозданием, но все же очищусь от грехов и стану на путь праведный.

О, Бог мой, у меня одна единственная просьба: дай мне спокойную и безмятежную старость, а когда предстану пред Тобой, то сделай так, чтобы возле моего гроба не зубоскалили мои враги.

Эй, Туррăм! Тĕрĕсех турăм-ши? Хама усал тăвакансем валли тавăру шырамарăм, пурне те каçартăм, ырлăхсывлăх сунтăм. Алă пама хатĕр, анчах хăйсем пăрăнса утаççĕ, куçран пăхма хăяймаççĕ. Пĕр чăваша та сутмарăм, сиен кӳмерĕм, халăм çитнĕ таран пулăшма тăрăшрăм. Панă çăкăршăн выççа тăрса юлмарăм, панă туммиршĕн çĕтĕке юлмарăм, панă укçашăн чухăна юлмарăм. Чăваш хутне кĕнĕшĕн ятăмсумăм чакмарĕ. Асăрхакан пулчĕ, ятлакан та тупăнчĕ, пурпĕр хам çулран пăрăнмарăм. Çапла пурăнма мана Чăваш Турри вĕрентсе пычĕ.

О, Бог мой! Верно ли я поступил? Тем, кто чинил мне зло не ответил злом, всех не только простил, но и благ и здоровья пожелал. Я готов им и руку протянуть, но они, не смея посмотреть мне в глаза, обходят меня стороной. Ни одного чуваша не предал, не причинял вреда, по мере своих возможностей старался помочь им. Отдал хлеб – голодным не остался, отдал одежду – в рванье не остался, отдал деньги – не обеднел. За то, что защищал чуваша, чести не лишился. Одни все это замечали и оценивали по достоинству, находились и критиканы, но все же не свернул я со своего истинного пути. Так жить научил меня Чувашский Бог.

Турăçăм, каçар мана. Телейсĕр чăвашсем йышлă чухне хам пурнăçăм ăнăçли çинчен калаçни вырăнлах та мар. Телейсĕр халăхăн телейлĕ ывăлĕ пулни мана пачах та савăнăç кӳмест. Çакна туйса илме те Эсех пулăшрăн. Хамшăн мар, халăхăмшăн ыйтатăп: чăваш килне хупăнма ан пар; йышлат пире, хырăм пăрахса çылăха кĕрессинчен хăтар, нумай ачаллисене ырлăх та сывлăх пилле. Пире паян Улăп пек çирĕп, ĕçчен те хăюллă ывăлсемпе хĕрсем кирлĕ. Несĕлсем хывнă пурнăç çулĕ нихăçан та ан татăлтăр. Эсĕ пулăшнипе ку таранччен сыхланса юлтăмăр, малашне те çаплах пултăр.

О, мой Бог, прости меня. В ту пору, когда вокруг множество несчастных чувашей, не уместно говорить о своей счастливой жизни. Быть счастливым сыном несчастного народа – это тоже несчастье. Осознать все это мне помог Ты. Не за себя прошу: не дай опустеть чувашскому дому; размножь нас, избави от греха прерывать беременность, многодетным дай добра да здоровья. Нам сегодня нужны крепкие, трудолюбивые и отважные, как Улып, сыновья и дочери. Да пусть никогда не оборвется тот славный путь, проложенный нашими предками. С Твоей помощью до сегодняшнего дня сохранились, да будет так и впредь!

Эй, Чăваш Турри! Эсĕ пурри пирĕншĕн калама çук пысăк телей. Каçар пире, урăх халăх турринчен ырлăх кĕтсе улталанса пурăннă мĕскĕнсене. Çакна эпир хамăр ирĕкпе туман: хĕçпе хăратса Санран пăрса янă пире, пăхăнманнисене пинĕ-пинĕпе леш тĕнчене ăсатнă. Эсĕ пурпĕрех пăрахмарăн, ырлăхна та хĕрхенмерĕн. Эсĕ пуртанах эпир те пур.

Чăваш Турри! Тав Сана, мухтав Сана! Тĕрĕслĕхӳ, хăвату, ырлăху Сан нихăçан та ан иксĕлтĕр, пире çĕклесе пытăр. Эпир вара Сана яланах чĕрере упрăпăр, Сан ачусем пулнине нихăçан та манмăпăр.

О, Чувашский Бог! Твое существование для нас несказанно огромное счастье, прости нас, обманутых и несчастных, за то, что ждали мы благодати от бога другого народа. Мы поступили так не по своей воле: мечем и огнем отстранили нас от Тебя, непокорных тысячами отправляли на тот свет. Ты все равно нас не бросил, не обделил нас Своей благодатью. Мы существуем благодаря Твоему существованию.

Бог Чувашский! Благодарим Тебя, слава Тебе! Твои справедливость, могущество, благодать да не иссякнут во веки веков, пусть и впредь придадут нам силы. Мы же всегда будем хранить Тебя в сердцах наших и никогда не забудем, что мы – дети Твои.



Аслӑ Туррӑмӑр! Халӑху Сан хӑв пекех ырӑскер. Чӑваш япӑх çын теекенӗн чӗлхи типсе хӑртӑр.

Пахчари улмуççи кӑçал та шап-шурӑ чечеке ларчӗ, кӗркунне вара сӗткенпе тулнӑ хӗрлӗ улмапа илемленчӗ. Анчах та хӑй ырӑлӑхне пулах хуçӑлса аманчӗ. Эпир те çавах, ыттисене ырӑ тӑвас тесе йывӑрлӑха ытларах хамӑр çине илсе пытӑмӑр, сывлӑха хавшатрӑмӑр. Пирӗн ӗçченлӗхпе усӑ куракансем йышлӑн пулчӗç, тав тӑвакан – тупӑнмарӗ. Халӗ ӗнтӗ куçӑмӑр самаях уçӑлчӗ: хамӑр шӑпана хамӑрӑнах татса памалла. Пуласлӑх пирӗн хамӑртах, шанчӑкӑмӑр вара – Санра, ырӑ халӑхӑн Ырӑ Турри.



О, Великий Бог! Народ Твой, как и Ты, добр. Типун тому на язык, кто осмелится сказать, что чуваш плохой человек.

Яблоня в саду и нынче покрылась белым цветом, а осенью украсилась сочными красными яблоками. Но из-за своей плодовитости обломилась. Так же и мы, стремясь сделать добро другим, основную ношу несем на себе, тем самым подрывая свое здоровье. Пользующихся нашим трудолюбием было множество людей, а благодарных – не нашлось. Теперь мы изрядно прозрели: свою судьбу должны сами вершить. Наше будущее – в нас, а надежда – в Тебе, Добрый Бог доброго народа.

Эй, Туррăмăр! Улшăнма пулăш пире. Хальхи пурнăç йĕркинче киввиех хуçаланать, çĕннине çул парасшăн мар. Улшăнмалла пирĕн, тĕпрен улшăнмалла. Чи малтанхи утăм вара ăс-тăнран пуçланмалла. Тĕнчене урăхлатассишĕн тĕрткелешсе çӳриччен хамăр ăс-тăна вăйлатасси пирки тăрăшар, çирĕп пĕлӳ çине тайăнса çĕнĕлле пурăнма вĕренер. Таврари илемпе киленме, çулсерен пухнă мулпа тĕрĕс усă курма урă пуç кăна пултарать. Пысăкрах тĕллевсем лартасчĕ. Пĕчĕк тĕллев кахаллантарать. Пысăкки вара пуça та, ал-урана та лайăхрах ĕçлеттерет, çитĕнӳ патне çывхартать.

Хамăр тăрăшсан тата, Туррăмăр, Эсĕ пулăшсан эпир те пурнăç хуçи пулăпăр, савăнăçлă саманта телей алă çупса тăнине те курăпăр.

О, Бог наш! Помоги нам преобразиться. В укладе нынешней жизни верховодит старое же, не хочет уступить дорогу новому. Надо преобразиться нам, в корне преобразиться. Первые шаги нужно начать с духовности, интеллекта. Чем блуждать в области глобализма и мировых вопросов, нам нужно развивать и укреплять свой интеллект, учиться уму-разуму и на этой основе научиться жить по-новому. Любоваться окружающей нас красотой, с умом пользоваться благами, нажитыми годами, может только трезвый человек. Нужно ставить масштабные цели. Ничтожные цели расслабляют. Крупномасштабные планы заставляют работать и голову, и руки, и ноги, быстрее приближают к успеху.

Бог наш, если сами постараемся, если Ты нам поможешь, то мы непременно станем хозяевами своей жизни. Тогда наступит тот миг, когда счастье будет рукоплескать и нам.



Эй, Чăваш Тĕнчине тытса тăракан Аслă Туррăмăр! Санăн ырлăху пуçăмăр çине пĕр вĕçĕм çуса тăрсан та телейĕмĕр пирĕн тулли мар. Мĕншĕн тесен пур чăваша та пĕрлештерсе тăракан уйрăм Патшалăхăмăр çук.

Пурнан пурнăçра хăшĕсем нимĕн те çук çĕртех хăйсен патшалăхне туса хунине те куртăмăр. Пирĕн вара пурте пур: çĕрĕ те, шывĕ те, халăхĕ те... Анчах хамăра чыслама пĕлменни чăрмав-инкек кӳрет.

Хăй пурнăçне йĕркелеме пултарайман халăх çук. Чăмăртанасчĕ пирĕн, пĕр хуранта пиçнĕ çимĕçпе кĕрекене ларса вăй илесчĕ. Пурнăç пилленĕшĕн тавах Сана, Аслă Туррăмăр. Ирĕклĕ Патшалăх туса хума хастарлăх пар пире. Вара пирĕнтен вăйлă, пирĕнтен ăслă, пирĕнтен илемлĕ халăх Çĕр çинче урăх пулмĕ те. Эпир начар йăхран мар! Пулăшса пыр пире, Чăваш Тĕнчине тытса тăракан хăватлă Аттемĕр-Аннемĕр!

О, Великий Бог – Покровитель Чувашского Мира! Хотя и Твоя благодать нескончаемым потоком исходит на нас, но счастье наше неполное. Ибо нет у нас Государства, объединяющего всех чувашей. В этой жизни мы повидали и такое, когда некоторые из ничего создавали свое государство. У нас же все есть: и земля, и вода, и народ... Но бедой и преградой является неумение уважать самих себя.

Нет народа, который бы не сумел обустроить свою жизнь. Сплотиться бы нам, собравшись за общим столом, отведав пищу из одного котла, набраться бы сил. Благодарим Тебя, Великий Бог, за то, что даровал нам жизнь. Так дай же нам отваги создать Свободное Государство. Тогда сильнее нас, мудрее нас, пригожее нас народа и на всей Земле не будет. Мы не из слабого рода-племени! И впредь помогай нам, Покровитель Чувашского Мира – Великий Чувашский Бог в ипостаси Отца и Матери!



КИБЕЧ

КЁЛЁ – МОЛИТВА

Песнь мольбы и покаяния

На чувашском и русском языках

Переводчик *А. Тургиль*
Редактор *Ю. А. Силэм*
Художник *И. П. Михайлова*

Подписано в печать 18.05.2004 г.
Формат издания 84x108/32. Печать офсетная.
Бумага писчая. Усл. п. л. 2,75.
Тираж 3000 экз. Заказ № 944.

Отпечатано с готового оригинал-макета
в ОАО «Чебоксарская типография № 1».
428019, г. Чебоксары, пр. И. Яковлева, 15.